*Чӑвашсен паллӑ ҫыннисем*

# Степан Максимов



Композитор-фольклорист, музыка педагогӗ, общество деятелӗ Степан Максимович Максимов – чӑвашсен профессиллӗ музыкин никӗсне хывакансенчен пӗри.

Вӑл 1892 ҫулхи октябрӗн 30-мӗшӗнче хальхи Тӑвай районӗнчи Енӗш Нӑрвашра ҫуралнӑ. Унтах икӗ класлӑ шкул пӗтерсен, 1907–1911 ҫулсенче Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ. Унӑн музыкӑллӑ пултарулӑхне аталантарма, И. Я. Яковлев тӑрӑшнипе, Чӗмпӗрте ӗҫленӗ вырӑс музыканчӗсем пулӑшнӑ. Иван Яковлевич ӑна хӑйӗн шкулӗнчех хӑварнӑ: С. Максимов ачасене сӗрме купӑс калама вӗрентнӗ, хӗлӗхлӗ инструментсен оркестрне ертсе пынӑ, юрӑ учителӗ пулнӑ. 1914 ҫулта вӑл юрӑ учителӗн ятне илме Хусанти музыка училищине экстерн йӗркипе экзамен тытать. 1930–1935 ҫулсенче Мускаври консерваторире вӗренет, А. Н. Александров профессор ертсе пынӑ композици класне пӗтерет. Чӑваш хушшинче аслӑ пӗлӳ илнӗ пирвайхи композитор пулнӑ вӑл.

Максимов педагог Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче (1911–1925), Чӗмпӗр уесӗнчи Тимӗрҫелти пуҫламӑш шкулта (1919–1921), Шупашкарти музыка шкулӗнче (1926 ҫултанпа), музыка училищинче (1929–1930, 1935–1937) ӗҫленӗ. Вӑл чӑваш шкулӗсенче вӗренекенсем валли юрӑ кӗнекисем ("Чӑваш кӗввисем", "Революци юррисем", "Шкул юррисем"), "Музыка ҫырӑне вӗренмелли кӗнеке" кӑларнӑ. Г. Хирбю, Ф. Лукин, А. Орлов-Шуҫӑм, В. Ходяшев, А. Токарев, Ф. Васильев композиторсене тата ытти вуншар музыканта С. Максимов вӗрентнӗ. Вӑл республикӑри музыка культури валли наци кадрӗсем хатӗрлес ӗҫе пуҫаракансенчен пӗри.

Чӑваш халӑх музыкине пухакан, ӑна тӗпчекен, пропагандӑлакан деятель пулнӑ С. Максимов. Ку тӗлӗшпе ӑна ҫитекенни урӑх пулман та. Фольклорист малтанхи тапхӑрта ытларах анатри чӑвашсен юррисемпе интересленет. Шупашкара пурӑнма куҫсан вара республикӑн ҫурҫӗр районӗсем тӑрӑх ҫӳрет, унта пухнӑ материалсене "Тури чӑвашсен юррисем" (1932), "Гаврил Федоров юрласа панӑ 146 юрӑ" (1934) кӗнекесенче пичетлет. Тӗлӗнмелле чаплӑ юрӑҫӑ – Гаврил Федорова тупса, унӑн 600 ытла юррине ҫырса илет С. Максимов. Эпир ӑна пӗр ҫавӑншӑн кӑна ӗмӗр тав туса пурӑнма тивӗҫ.

Композитор хӑй пухнӑ юрӑсене (икӗ пине яхӑн) тата темиҫе кӗнекепе пичетлесе кӑларма хатӗрленнӗ. Анчах та ҫав кӗнекесене хӑй виличчен алла тытса курайман. Юлашки сборникӗ ("Чӑваш халӑх юррисем") Мускавра 1964 ҫулта тухрӗ, унта "Чӑваш халӑх юрри" ятлӑ тӗпчев статйине тата 320 юрӑ кӗртнӗччӗ. Вӑтӑрмӗш ҫулсенче И. Лоблинпа, В. Кривоносовпа пӗрле хатӗрленӗ "Чӑваш халӑхӗн юрӑ творчестви" монографи те интереслӗ пулмаллаччӗ (унта 450 юрӑ кӗртнӗччӗ).

Хӑй пухнӑ халӑх юррисенчен чылайӑшне композитор хорпа е пӗччен юрлама илемлетнӗ (1917 ҫултан пуҫласа). Вӗсенчен чи паллисем: "Ака-суха юрри", "Атьӑр, хӗрсем, выляма", "Вӗҫ, вӗҫ, куккук", "Ан авӑн, шӗшкӗ", "Пирӗн атте – сазан пул", "Анатран хӑпарать шурӑ пӑрахут", "Уй варринче", "Юри кайрӑм", "Ҫӑлтӑр витӗр", "Шӑнкӑр кӑна", "Мулкач юрри". Ҫӗнӗ пурнӑҫ темипе ҫыхӑннӑ массӑллӑ юрӑсем те пур: "Ҫӑпата", "Хутламхутлам хуткупӑс", "Ҫуллахи пек", "Колхозниксен ӗҫ юрри" т. ыт. те. Пысӑк формӑллӑ сочиненисенчен чи малтан симфони оркестрӗ каламалли Увертюрӑна тата фортепьянӑпа каламалли Сонатинӑна асӑнмалла (иккӗшне те 1935 ҫулта ҫырнӑ).

С. М. Максимовӑн пархатарлӑ ӗҫне 1937 ҫул вӗҫӗнче путлантарнӑ: композитора, буржуаллӑ националист тесе, вунӑ ҫуллӑх тӗрмене хупнӑ. Ҫапла 1956 ҫулччен унӑн ятне халӑхра асӑнман, юррисене юрламан.

Коммунистсен партийӗн членӗ (1919), СССР композиторсен союзӗн членӗ (1933), Чӑваш АССР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ (1934) пулнӑ Степан Максимович Максимов. Вӑл Шупашкарта 1951 ҫулхи августӑн 26-мӗшӗнче вилнӗ. Шупашкарти 1-мӗш номерлӗ музыка шкулӗ тата пӗр урам унӑн ячӗпе хисепленеҫҫӗ.

**Ю. ИЛЮХИН,**
музыковед.